20-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
18
КĔÇНЕРНИКУН
292(6227) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Колхозлă ялăн хăватлă патриотизмĕ

Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташăн доклачĕпе хавхаланса тата тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса, Орел облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем государствăна 1942 çулшăн тырпул, аш-какай, утă памалли плансене ирттерсе тултарнă хыççăн хăйсен килĕнчи выльăхсенчен Хĕрлĕ Çар фондне 10.000 пăт аш-какай тата хăйсен запасĕсенчен 23.000 пăт çĕрулми хывнă. Аш-какайпа çĕрулмие Хĕрлĕ Çар фондне хывасси малалла та пулса пырать.

ССР Союзĕнчи ĕççынисем çак пуçарăва та, Тамбов, Саратов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен пуçарăвне йышăнса илнĕ пекех, ырă кăмăлпа йышăнса илĕç. Орел облаçĕнчи хресченсен патриотизмлă пуçарăвĕ колхозниксем тăван çĕршыва чĕререн парăннине, вĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтерсе тăкма пирĕн геройла Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăнине уççăн палăртать. Вăл пуçару отечественнăй аслă вăрçăра фронтпа тыл хушшинчи çыхăну тĕреклённине, совет халăхĕн моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ ÿснине кăтартса парать.

Совет халăхĕ ирсĕр тăшмана хăвăртрах пĕтерсе тăкас ĕмĕтпе пурăнать. «Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ тума!»—çак ĕмĕт-кăмăлпа ĕçлет паян совет халăхĕ. Советăн кашни çынни Хĕрлĕ Çара тĕрлĕ майсемпе пулăшма тăрăшать, Хĕрлĕ Çаршăн хăй мĕн тума пултарать—çавна йăлтах тăвать. «Пирĕн халăхăн чĕринче пархатарлă Кузьма Мининăн хăвачĕ пурăнать, вăл тăшман тапăнса кĕнĕ йывăр кунсенче Чулхула çыннисене хамăр тăван çĕршыва хÿтĕлесе хăварас тесе калама çук пысăк жертвăсем тума чĕннĕ. Чулхула ополчени туса хĕçпăшаллантарнă, çакă вара Мускава çăлса хăварнă» («Правда»).

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, рабочисемпе колхозниксем тата служащисем, Совет Союзĕнчи мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрле, Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшас тесе хăйсен мĕнпур вăй-хăватне, ĕçри пуçарулăхĕпе тавçăрулăхне мобилизацилеççĕ. Кольцовкăри Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен тата Елчĕк МТС-ĕн работникĕсен пуçарăвĕ республикăра ăнăçлăн сарăлать. Колхозниксемпе трактористсем хăйсен перекетлесе усранă укçи-тенкине танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума параççĕ. Республикăра çак ĕç валли декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 15.000.000 тенке яхăн укçа пухнă. Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 1.350.000 тенкĕ пухса государство банкне хывнă. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 250.000 тенкĕ пухса укçине банка хывнă. Колхоз председателĕ А. Васянин юлташ хăй 5.000 тенкĕ панă.

Танксен колоннисене тума укçа-тенкĕ пухас ĕç Улатăр, Чкаловски, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри тата Шупашкар районĕсенче те ăнăçлăн пырать.

Пирĕн хаçатăн иртнĕ номерĕнче Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсем республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе калани пичетленсе тухрĕ.

— Тăван çĕршыв умĕнчи хамăр тивĕçе туйса, хаяр тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма пулăшас тесе, эпир хамăрăн хуçалăхран перекетленĕ, ĕçкунĕсем тăрăх илнĕ тыррăн пĕр пайне Хĕрлĕ Çарăн фондне хыватпăр,—тесе çыраççĕ «Марс» колхоз членĕсем вăл çырура. — Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, эпир сире пирĕн примера йышăнса илме чĕнетпĕр. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар эпир пулăшнипе нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене татах та вăйлăнрах çапса аркатса пытăр.

«Марс» колхоз членĕсем çак ĕç валли 360 пăт тырă пухнă. Кун хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне хывма Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кĕске вăхăт хушшинчех 141 пăт, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 90 пăт пухнă.

Елчĕк районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тепĕр патриотизмлă ĕç пуçарчĕç. Вĕсен пуçарăвне республикăри кашни колхозникпе колхозница ырласа йышăнса илĕ.

Хĕрлĕ Çарăн фондне тырă хывас ĕç Вăрмар районĕнчи колхозсенче те пуçланчĕ. Шăхальри «Хĕрлĕ Шăхаль» колхоз членĕсем хăйсен запасĕнчен 220 пăт тырра Хĕрлĕ Çар фончĕ валли 14 лавпа хатĕрлев пунктне леçрĕç. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, МТС-сен политотделĕсен, партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен пуçарăвĕ çинчен колхозниксемпе колхозницăсене анлăн ăнлантарса памалла.

Хĕрлĕ Çар аш-какай ытларах ыйтнине тивĕçтерес шутпа колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли аш-какай фончĕ тума кăмăл тунине ырласа, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Хĕрлĕ Çар валли 1943 çулта аш-какай фончĕ тăвасси çинчен постановлени йышăнчĕç. Колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне аш-какай памалли виçене çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен шутласа памалла тунă. Государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай памалли хаксене, йĕркене, условисене тата ответлăха Хĕрлĕ Çар фондне аш-какай панă çĕрте те вăя кĕртмелле. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйне тата райсовет исполкомĕсен председателĕсене Хĕрлĕ Çар фондне аш-какай памалли плана кашни колхоз патне çитерме тата ăна государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай парас ĕç валли тунă срокసенчех пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме хушнă.

Çак постановление республикăри колхозсем ырласа кĕтсе илеç. Красноармейски районри «Малалла» колхоз членĕсем, 1942 çулхи аш-какай обязательствине срокчен пурнăçласа, çитес çулшăн аш-какай пама тытăнчĕç. Ку ĕçе ялсовет исполкомĕн депутачĕсем пуçарса ячĕç. Депутатка Е. Степанова юлташ 1943 çулшăн 46 килограмм, Г. Мефодьев—20 килограмм, 50 çулхи колхозник В. Сергеев—26 килограмм, М. Терентьев—40 килограмм аш-какай пачĕç. Вăрмар, Ишлей, Йĕпреç районĕсенчи колхозсемпе колхозниксем, обязательнăй йĕркепе памалли плана тултарнă хыççăн, 1.900 килограмм çăм государствăна сутрĕç. Вăрнар, Етĕрне районĕсенчи чылай колхозсем 1943 çулшăн натуроплата тыррине аванс шучĕпе тÿлеме тытăнчĕç. Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз çитес çулшăн аванс шучĕпе 3.000 пăт, Зеленовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз—120 пăт, «Рапорт»—90 пăт, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз—150 пăт натуроплата тыррине хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç. Çак паха примерсем колхозлă ялăн хăватлă патриотизмĕ çинчен калаççĕ. Колхозлă ял, чăваш ĕççыннийĕсем фронта вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Çак пулăшăва пирĕн кунран кун ÿстерсе пымалла. ВКП(б) райкомĕсен, МТС-сен политотделĕсен, партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен Сталин юлташпа Хĕрлĕ Çарăн тавне тивĕçлĕ пулнă Тамбов тата Саратов облаçĕсенчи колхозниксен пархатарлă пуçарăвĕ çинчен халăха анлăн ăнлантарса парса, ĕççыннисене фронта пулăшнă çĕре вăйлăн мобилизацилесе пымалла. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен пуçарăвне сарса, ытлашши тырра Хĕрлĕ Çар фондне хывнă çĕре республикĕри колхозниксен анлă массине явăçтармалла, танксен колоннисене тумашкăн укçа пухассине хăвăртлатмалла.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ, СТАЛИН ЮЛТАША

Государствăна тырпул памалли çулталăкри плана 109 процент, утă памалли плана 210 процент тата аш-какай памалли плана 133 процент тултарнă хыççăн, Сирĕн, Сталин юлташ, докладпа хавхаланса тата хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи, ăна фронтра хÿтĕлекенсем умĕнчи — Хĕрлĕ Çар умĕнчи тивĕçне ăнланса, Орел облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен килĕнчи выльăхсенчен Хĕрлĕ Çар фондне 10.000 пăт аш-какай тата хăйсен запасĕсенчен 22.000 пăт çĕрулми пачĕç. Аш-какайпа çĕрулмие Хĕрлĕ Çар фондне парас ĕç малалла пулса пырать.

ВКП(б) Орел Обкомĕн секретарĕ МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Центральный Комитетне—Сталин юлташа

Сирĕн, Сталин юлташ, историллĕ докладпа тата приказпа хавхаланса, Горький облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем боевой самолетсен «Валерий Чкалов» ятлă эскадрильйине тума укçа пухас ĕçе организацилерĕç. Пурĕ 60.000.000 тенкĕ пухнă.

Çавăнпа пĕрлех облаçри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне хăйсен запасĕсенчен 5.000 пăт тырă хывнă.

«Валерий Чкалов» ятлă эскадрильйăна тума укçа пухас ĕç тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас ĕç малалла пырать.

ВКП(б) Горький Обкомĕн секретарĕ РОДИОНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Суровикинăран хĕвеланăçнерехре халăх пурăнакан пункта тытса илнĕ чухне пирĕн войскăсем тĕрлĕ калибрлă 305 оруди, 1.500 автомашинăна яхăн, çар пурлăхĕ тиенĕ 2 поезд составне, боеприпассен склачĕсене, çавăн пекех тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, Верхне-Кумская районĕнче, икĕ кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем противникăн çав района кĕрсе кайнă войскисен группине аркатса тăкнă тата нимĕçсен 6-мĕш танковăй дивизийĕн 50 танкĕпе пĕр полк мотопехотине пĕтерсе тăкнă.

Сталинград районĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 35 самолетне, çав шутра 4 транспортнăй самолетне, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 12 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче пирĕн чаçсем активлăн çапăçнă. Совет боецĕсен пысăк мар ушкăнĕсем противник тăракан вырăна сăрхăнса кĕрсе кайнă та темиçе дзота вĕсенчи гарнизонсемпе пĕрлех сирпĕнтерсе янă. Заводсен районĕнче артиллерипе минометсенчен хире-хирĕç персе тăнă. Снарядсемпе минăсем тĕп пырса лекнипе противникăн темиçе укреплениййĕ çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем противник çине персе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсем, хăйсен иртнĕ кун пăрахса хăварнă позицийĕсене çĕнĕрен тытса илес тесе тăрăшса, пирĕн подразделенисене темиçе хут контратакăланă. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă. Пур йышши хĕçпăшалсенчен те персе тăшманăн 200 çити салтакĕпе офицерне тата 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет разведчикĕсем противникăн боеприпассем хунă икĕ складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Центральнăй фронтра, Ржевран хĕвеланăçнерехри районра, Н-ски чаçăн боецĕсем противника халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктран хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла тата техники нумай выртса юлнă. Кÿршĕри участокра Н-ски соединенин боецĕсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă, нимĕçсен 600 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 16 танка, артиллери батарейине тата минометсен 2 батарейине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Ржев—Вязьма чугунçулĕ районĕнче пирĕн пехотăн уйрăм отрячĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Нимĕçсен 5 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн войскăсене малалла куçма чарас тесе, нимĕçсем хăйсен пехотипе танкĕсен вăйĕсемпе темиçе хутчен контратака тунă, анчах та вĕсем ăнăçман. Çав çапăçусенче казак-гвардеецсем тăшманăн 13 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 9 автомашинине тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противникăн пехотипе танкĕсен группи пирĕн подразделенисене каялла чакарма хăтланнă.

Çапăçура 50 çын тата 5 танк çухатсан, нимĕçсем хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă. Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче противникăн 5 самолетне персе ÿкернĕ, 6 самолетне сиенленĕ.

* * *

Полесье облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн пĕр паха чугунçулĕ çинчи станцине пырса тапăннă. Нимĕçсен 20 салтакне вĕлернĕ, поездсене йышăнмалли-ăсатмалли хатĕрсене стройран кăларнă тата телефонпа телеграф çыхăнăвне пăснă. Партизансен тепĕр отрячĕ ансăр чугунçула çĕмĕрнĕ тата Германие ăсатма хатĕрлесе хунă йывăççене çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Сталино хулинче Германие каторгăлла ĕçе кайма килĕшмен мирлĕ совет граждăнĕсем валли пысăк лагерь туса хунă. Çав лагере хупнă çынсене гитлеровецсем выçăпа асаплантараççĕ, вĕсене темиçе кун хушшинче нимĕнле апат та памаççĕ. Çав лагерьте куллен 10—15-шер çын вилет.

* * *

Францин темиçе районĕнче партизанла движени сарăлса пырать. Франци çарĕн киле яма тивĕçлĕ салтакĕсемпе офицерĕсем нумайĕшĕ хĕçпăшалсем илсе ирĕклĕ стрелоксен отрячĕсене кайнă. Франци патриочĕсен пысăк мар отрячĕсем засадăсем туса нимĕçсен транспорчĕсене тапăнаççĕ тата чугунçулсем çинче диверсилле ĕçсем тăваççĕ. Париж—Бизриц тата Париж—Марсель чугунçулĕсем çинче пĕр эрне хушшинче нимĕçсен войскăсемпе çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 11 поездне ÿпĕнтерсе янă. Партизансем активлăн кĕрешсе нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене нумай çынна вĕлернĕ тата амантнă.

Декабрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Пирĕн карапсем Хура тинĕсре противникăн 5.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне çунтарса янă тата хуралта çÿрекен пысăк катерне путарнă. Çавăн пекех тата противникăн миноносецне снарядсем тĕп лекнине палăртнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем, тăшман çирĕплетнĕ темиçе здание çавăрса илсе, штурмласа тытса илнĕ. Тăшманăн 160 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Хулан кăнтăр хĕрринче пирĕн артиллери печнипе нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, противникăн 6 дзотне тата 2 блиндажне çĕмĕрнĕ, минометсен батарейине тата артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем йышăннă позицисене çирĕплетнĕ тата противник çине персе тăнă. Пĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен персе тăшманăн 12 дзотне çĕмĕрнĕ тата 6 огневой точкине пусарса ларнă. 15 пулемет, 8 миномет тата 800 противотанковăй мина тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен пехоти танксем пулăшса тăнипе тунă темиçе атакăна пирĕн чаçсем сирсе пăрахнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 8 танкне çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă, нимĕçсен пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хевеланăçнерехре пирĕн чаçсем, тăшмана хирĕç çапăçса, малалла куçнă тата противникăн çирĕплетнĕ позицийĕсене йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 400 çити салтакĕпе офицерĕ вилсе тата аманса пĕтнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем пăрахса хăварнă хĕçпăшалсене нумай пухса илнĕ. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем, противника хăваласа пырса, нимĕçсен 9 танкне, 11 противотанковăй орудине, 14 автомашинине тата гитлеровецсен пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсемпе нимĕç салтакĕсене тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра Н-ски часть нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Çитĕнĕве малалла аталантарса пырса, совет боецĕсем халăх пурăнакан 5 пункта, пĕрин хыççăн тепĕрне, гитлеровецсенчен тасатнă. Нимĕçсен пехотине икĕ батальона çити, 24 танк, 20 оруди, пулеметсен 80 точкине, 95 дзот тата боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă. Продовольствипе тумтирсен 3 складне, 32 автомашина тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Великие Луки районĕнче противник нимĕç гарнизонĕ патне, пирĕн войскăсем халăх пурăнакан пĕр пунктра çавăрса илнĕскер патне, татса кĕме хăтланнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе пăрахнă, нимĕçсене йывăр çухатусем кÿнĕ. Нимĕçсен 8 танкне тата 4 бронемашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Галунов юлташ командир пулса тăракан чаçри летчиксем тăшманăн аэродромне тапăннă. Çав аэродром çинче нимĕçсен 40 самолечĕ ларнă пулнă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăннă пирки, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăма пултарайман. Бомбăсем пăрахса, çавăн пекех тата тупăсемпе пулеметсенчен персе, тăшманăн 18 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 3 самолетне сиенленĕ. Çав кунах совет летчикĕсем противникăн тепĕр аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă, унта тăшманăн 13 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Партизансен Орел облаçĕнче кĕрешекен «В бой за Родину» ятлă отрячĕ, нимĕçсен карательнăй отрячĕпе çапăçса, тăшманăн 25 салтакне вĕлернĕ. Çав отрядри партизансем пĕр уйăх хушшинче противникăн 4 çар эшелонне ÿпĕнтернĕ. Крушенисем пулнипе 40 вагон, паровоз çĕмĕрĕлнĕ тата гитлеровецсем нумай вилсе пĕтнĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи Клинцы хулинче нимĕçсем, питех те нумай вăйсемпе средствăсем тăкакласа, темиçе пысăк мар предприятие ĕçе янă. Хĕçпăшал вăййĕпе уса курса, гитлеровецсем совет граждăнĕсене цехсене хăваласа кĕртнĕ те вĕсене нимĕçсен çарĕ валли заказсем пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçе тытăнма хушнă. Совет патриочĕсем предприятисенчи оборудованине çĕмĕрсе пĕтернĕ те тарса пытаннă. Нимĕçсем совет çыннисене тискеррĕн асаплантарма тытăннă. Гестаповецсем нумай çынсене арестленĕ, вуншар çынсене персе пăрахнă. Нимĕçсем темĕн пек хаяр мерăсем йышăннă пулин те, предприятисем паян кун та ĕçлемесĕр тăраççĕ.

Етĕрне районĕ государствăна тырă парса татрĕ

Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕç, çавăн пекех тата государствăна МТС ĕçĕсемшĕн тÿлемелли натуроплата тыррине те аллапанă счетсем тăрăх пĕтĕмпех парса татрĕç. Районра малта пыракан колхозсем — Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхоз, Полянкăри Киров ячĕпе тăракан колхоз, Чебаковăри «Сура» колхоз, Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхоз Етĕрне МТС-ĕн килэс çулхи ĕçĕсемшĕн государствăна тÿлемелли натуроплата шучĕпе аванс тырă парса хураççĕ. Районри колхозсем государствăна аш-какай памалли плана та ирттерсе тултарнă.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. СОМОВ,
райсовет исполкомĕн председателĕ С. АГЕЕВ.

Хĕрлĕ Çар фондне—220 пăт тырă

ВĂРМАР, декабрĕн 17-мĕшĕ. **(Телефонпа)**. Районри ĕççыннисем фронта хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕпе пулăшнисĕр пуçне ĕçкунĕсем тăрăх илнĕ ытлашши тĕштырра Хĕрлĕ Çар фондне хывнипе пулăшаççĕ. Шăхальри «Хĕрлĕ Шăхаль» колхозра Кадерова, Черзерова колхозницăсем, Салмин тата Чернов колхозниксем сĕнÿ панипе çак ĕç валли декабрĕн 13-мĕшĕнче пурĕ 220 пăт тырă пухнă. Колхозниксем çак тырра тепĕр куннех 14 лавпа хĕрлĕ обоз организацилесе хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Ку ĕç районри ытти колхозсенче те пуçланчĕ.

А. СМИРНОВ.

ВĂРНАР, декабрĕн 17-мĕшĕ. **(Телефонпа)**. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем фронта тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăраççĕ. Вĕсем çитес çулшăн МТС ĕçĕшĕн натуроплата тыррине аванс шучĕпе тÿлес ĕçе пуçарса, декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне çак ĕç валли 3.000 пăт тырă леçрĕç. Кольцовкăри колхозниксен примерне йышăнса илсе, Зеленовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 60 пăт, «Рапорт» колхоз членĕсем 90 пăт, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем—150 пăт тырă МТС-ăн çитес çулхи ĕçĕшĕн тÿлерĕç.

С. ИГОРЕВ.

ВЦСПС-па СССР Наркоммясомолпромĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ тата СССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕ предприятисемпе хатĕрлев организацисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи ноябрьти итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС-па СССР Наркоммясомолпромĕ пирĕн республикăри Улатăр тата Вăрмар районĕсенчи хатĕрлев конторисене виççĕмĕш преми пама йышăннă.

Танксен хăватлă колоннисене тăвар

Заводской ялсоветĕнчи колхозниксем 1.000.000 тенкĕ параççĕ

КУКЕÇ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районри колхозниксем паянхи кун тĕлне 1.000.000 тенкĕ ытла пухса укçине государство банкне хывреç. Тамбов тата Саратов облаçĕсенчи колхозниксен пуçарăвĕ районри колхозсенче патриотизмлă пысăк çĕкленÿ пуçарчĕ. Заводской ялсоветĕнчи колхозниксем (ялсовет исполкомĕн председателĕ Петров, территориллĕ парторганизацин секретарĕ И. Григорьев юлташсем) çак ĕç валли хăйсемех 1.000.000 тенкĕ параççĕ. Çак ялсоветри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен колоннине тума 500.000 тенкĕ хывма пулнă, паянхи кун тĕлне 318.000 тенкĕ хывнă, «Красный флот» колхоз членĕсем 300.000 тенкĕ хывма кăмăл тунă, 186.000 тенкĕ хывнă. Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Гаврилов юлташ çак ĕç валли 7.000 тенкĕ панă.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

1.350.000 тенкĕ хывнă

ВĂРНАР, декабрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районри ĕççыннисем паянхи кун тĕлне пурĕ 1.350.000 тенкĕ пухса укçине Госбанка хывреç. Районра танксен колоннине тума 40.000 тенкĕрен кая укçа хывнă пĕр колхоз та çук. Ку ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ коммунист Васянин юлташ 5.000 тенкĕ, «Первое Мая» колхоз председателĕ Васильев юлташ—3.000 тенкĕ пачĕç. Чылай колхозниксемпе колхозницăсем çак ĕç валли 1.500—2.000-шер тенкĕ параççĕ. «Память Ленина» колхоз членĕ Кошкин юлташ 2.000 тенкĕ пачĕ.

Районра танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать

Д. ФЕДОРОВ.

Танксем тума укçа тенкĕ пухас ĕç ÿссех пырать

ÇĔРПУ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем ĕнерхи кун тĕлне танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 407.000 тенкĕ пухрĕç. Ку ĕçе Кăшаркасси ялсоветĕнчи колхозсем активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем юлашки ик-виçĕ кун хушшинче танксен колоннине тума 20.700 тенкĕ хыврĕç. Çавăн пекех «Красный Богатырь» колхоз членĕсем 19.000 тенкĕ, хулари Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 20.700 тенкĕ пухрĕç.

Танксен колоннине тума укçа пухас ĕç вăйланса пырать.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ИШЛЕЙ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин ячĕпе тăракан колхоз танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 50.000 тенкĕ укçа хывма пулнă. Халĕ вăл ку хисепĕн пĕр пайне государство банкне хывнă та ĕнтĕ. Анаткас Маркари «Правда» колхоз членĕсем танксен колоннине тума 12.400 тенкĕ, «Акара» колхоз членĕсем — 15.000 тенкĕ хыврĕç.

З. МИТРОФАНОВА.

* * *

ЭЛĔК декабрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Тамбов тата Саратов облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе хавхаланса, районри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçе вăйлатрĕç.

Ĕнерхи кун тĕлне государство банкĕн районри отделенине танксен колоннисене тума пурĕ 407.820 тенкĕ кĕнĕ. Укçа пухас ĕçре Кивĕ Матьăкри «Ударник» колхоз членĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем 51.080 тенкĕ пухса хывнă. «Труд» колхоз членĕсем — 29.100 тенкĕ, Вырăс Сурăмĕнчи «Доброволец» колхоз членĕсем — 22.500 тенкĕ, Ехремкассинчи «Первое Мая» колхоз членĕсем 15.125 тенкĕ пухнă. Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç Анат Йăлăмри, Яргунькинăри колхозсенче те начар мар пулса пырать.

М. КРАСИЛЬНИКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВĂРМАР. Хоруйĕнчи «Пионер» колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума хăйсем перекетлесе хăварнă укçи-тенкисене ырă кăмăлпа параççĕ. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех 7.000 тенкĕ пухрĕç. Фронтран аманса таврăннă красноармеец Унтин юлташ çак ĕç валли 100 тенкĕ пачĕ.

А. ИВАНОВ.

Чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕç республикăра мĕнле пырать

Чăваш АССР вăрман промышленность халăх комиссариачĕн предприятийĕсем-пе вăрман завочĕсем чугунçул транспорчĕ валли кăçалхи çулăн иккĕмĕш çурринче вутă хатĕрлесе памалли плана декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 105,3 процент, турттарас енĕпе 92,9 процент тултарнă. Вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Вăрнар леспромхозĕ (директорĕ Г. Сазонов юлташ) лайăх ĕçлет. Вăл çурçулти плана касас енĕпе 23 процент, турттарас енĕпе 19 процент ирттерсе тултарнă. Ун хыççăн Йĕпреçпе Атăл лешьенчи леспромхозсем (директорĕсем П. Федоровпа Кармачев юлташсем) пыраççĕ. Вĕсем çурçулти плана тултарнă хыççăн вутта 1943 çулшăн хатĕрлеççĕ. Орденоносец К. Федоров юлташ эртсе пыракан Канаш леспромхозĕ те юлашки вăхăтра çак ĕçе хăвăртлатрĕ. Леспромхоз 6 уйăхри ĕçсен планне пур енĕпе те срокчен 15 кун малтан тултарчĕ.

Уйрăм районсенчен халичченхи пекех Йĕпреç районĕ малта пырать. Вăл çурçулти задание касас енĕпе 62 процент, турттарас енĕпе 42 процент ирттерсе тултарнă. Калинински, Шупашкар, Вăрнар, Вăрмар, Кувакино, Улатăр тата Ишлей районĕсем те вутта кăçалхи заданирен ирттерсе хатĕрлеççĕ тата турттараççĕ.

Анчах чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе пĕрмаях юлса пыракан предприятисем те пур-ха. Буинскри вăрман завочĕ (директорĕ Сорокин юлташ), вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекенсен социализмлă ăмăртăвне тивĕçлипе организацилемен пирки, çурçулти задание декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 88 процент, турттарас енĕпе 73 процент çеç тултарнă. Çаван пекех ку тĕлĕшпе Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ (директорĕ Германов юлташ) тата Улатăр леспромхозĕ (директорĕ Наумов юлташ) çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ (директорĕ Осипов юлташ) турттарас ĕçĕн графикне питĕ начар пурнăçа кĕртсе пырать.

Юлса пыракан вăрман завочĕсемпе леспромхозсен ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла, вăрманта ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва лайăхрах организацилемелле, текех кивĕ майсемпе ĕçлемелле мар. Чугунçул транспорчĕ валли кăçалхи çулăн иккĕмĕш çурринче вутă хатĕрлемелли плана тултармасăр пĕр вăрман завочĕпе леспромхозăн та юлмалла мар.

Буртсемпе шăтăксенче хунă çĕрулмине шăнасран астумалла

Куславкка районĕнчи колхозсенче хĕл каçарма буртсемпе шăтăксене пуçтарса хунă çĕрулмине пăхса тухнă хыççăн çакă курăнчĕ: «Правда» колхозра шăтăка хунă çĕрулми пăсăлма тытăннă. Пăсăлма пуçланин сăлтавĕ акă мĕнре. Колхоз çĕрулмине шăтăка хурсанах малтан улăмпа, унтан тăпрапа хулăмăн витсе хунă. Ир витсе хунă пирки çĕрулми сивĕнсе çĕр температурипе танлашман. Çĕрулмине шăтăка хурсан Цельсипе 3—4 градус таран сивĕтмелле, кайран тин ăшшăн витсе хумалла пулнă.

Аманакри «Динамо» колхозăн уя шăтăксене пуçтарса хунă çĕрулминĕ, пĕтĕмпе илсен, лайăх упранса выртать. Анчах пĕр бригада (3-мĕшĕ) хăйĕн çĕрулмине шăнасран астуман. Шăтăка хунă çĕрулми çине вĕсем улăм нумай витнĕ те тăпра хурса пусарма маннă. Тăпра сийĕ шăтăк çинче питĕ те çӳхе. Çавăнпа малтанхи сивĕ кунсенчех çĕрулмин çиелти сийĕ шăнса кайнă.

«Красноармеец» колхозра буртсемпе шăтăксене хунă çĕрулмине йĕкехӳресемпе шăшисем пысăк сиен кӳме тытăннă. Вĕсем çĕрулмине çисе сиен кӳнисĕр пуçне, унта кĕме шăтăксем туса, хĕл каçарма пуçтарса хунă çĕрулмине шăнтса яма пултараççĕ.

Çакăнтан паллă ĕнтĕ, республикăри кашни колхозăнах буртсемпе шăтăксене хунă çĕрулмисене хĕл каçах лайăх пăхса усрама тăрăшмалла, вĕсем лайăх тăнине сăнаса, астуса тăрас пулать. Шăтăка сывлăш кĕме улăм кĕлти лартнă пулсан тата буртсенче вентиляци мăрйисем пур пулсан, çĕрулми температурине вăхăтран вăхăта термометрпа виçсе сăнаса тăрас пулать. Буртсенче ăшă Цельсипе пĕр градусран кая тата 2—3 градусран ытла пулмалла мар.

Температурăна çакăн пек пĕлме май çук пулсан, тӳлек кун шăтăка пĕр çĕртен кĕреçепе уçса пăхмалла, температурăна пĕлнĕ хыççăн ăна каллех тĕплĕн витсе хумалла. Шăтăка е буртсене хунă çĕрулмине сивĕрен хăтарма май çук пулсан, ăна нӳхрепсемпе подвалсене тирпейлĕн куçарассине организацилемелле.

Доцент К. НАУМОВ.

Ялсоветсемпе колхозсен председателĕсен семинарĕ

ВĂРМАР, декабрĕн 17-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ялсоветсемпе колхозсем председателĕсен теориллĕ пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе кашни уйăхрах иккĕ хутчен семинар ирттерме палăртнă. Семинарсем ултшар сехете пымалла. ВКП(б) райкомĕн бюровĕ семинарсене ирттерме районри партипе совет активĕнчен 12 çын уйăрнă.

Декабрĕн 11-мĕшпе 12-мĕшĕнче семинарăн пĕррэмĕш занятийĕ иртрĕ. Вĕсенче 27 ялсовет председателĕ, 48 колхоз председателĕ пулчĕç. Вĕсем унта совет законĕсем çинчен, хальхи лару-тăру тата пирĕн малашнехи задачăсем çинчен, виçĕ аслă державăн—ССР Союзĕ, Великобритани тата США туслăхĕ çинчен, партизанла юхăм çинчен докладсем итлесе сӳтсе-яврĕç.

И. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Юбилей концерчĕ

Декабрĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта, Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче, чăвашсен паллă композиторĕ, ЧАССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Василий Петрович Воробьев юлташ музыкăпа педагогика ĕçĕнче 40 çул хушши ĕçленĕ ятпа юбилей концерчĕ пулса иртрĕ.

Чăвашсен государство хорĕ (художествăлла руководителĕ композитор Ф. Лукин юлташ) концерта «Октябрь çулĕ» юрăпа пуçларĕ. Октябрьти Социализмлă Аслă революцичченхи хурлăха кăтартакан, çĕнтерӳ тума чĕнекен çак юрă концерта итлекенсене хумхантарчĕ. Аслă Октябрь çеç чăваш халăхне ирĕклĕн юрлама, чăваш композиторĕсене, çав шутра Воробьев юлташа та, юрăсем кĕвĕлеме май панă. Воробьев юлташ Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенчех Шупашкар хулинче рабочисен хорне организациленĕ. 1924 çулта вăл Ф. П. Павлов композиторпа пĕрле чăвашсен государство хорне организациленĕ. Çав хор валли юрăсен репертуарне тунă çĕре чăваш композиторĕсемпе пĕрле В. П. Воробьев юлташ та активлăн хутшăннă. Вăл музыка ĕçĕнче 40 çул хушши ĕçлесе, чăваш юррисене 800 ытла пухнă, хăй çырнă.

В. П. Воробьев юлташ отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче 16 произведени çырнă. Вĕсем пурте фашистла вăрăхурахсене хирĕç кĕрешекен Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхĕн паттăрлăхне, пултарулăхне тата геройлăхне кăтартса параççĕ.

Чăваш Правительстви В. П. Воробьев юлташăн ĕçне пысăккăн хакларĕ. Ăна 1940 çулта ЧАССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне панă.

Воробьев юлташ, чăвашсен музыка фольклорне юратса пуçтараканскер, хăйĕн творчествинче чăваш халăхĕпе çывăх тăрать. Çавăнпа унăн юррисем хумхантараççĕ. Унăн юррисем—пуринчен ытла хорпа юрламаллисем.

Хор «Тракторист юррине», «Колхозник юррине», «Комсомол юррине» тата «Туçа хĕрĕсем» ятлă юрра чуна киллентермелле юрласа пачĕ. Концертра чăваш хĕрĕсен ташшисене Малышкина, Иванова, Капустина тата ытти юлташсем килĕшӳллĕн ташласа пачĕç. Композитор В. Лебедев юлташ Воробьев композиторăн юррисемпе ташă кĕввисене купăспа выляса кăтартрĕ.

Агитаторсем ĕçре

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («**Чăваш Коммуни» корр.**). Янчеллă ялĕнчи агитколлектив массăллă-ăнлантарулла ĕçе аван йĕркеленĕ. Агитколлективра 17 çын. Вĕсене уйрăм бригадăсем çирĕплетсе панă. Агитколлектив руководителĕ коммунист М. Димитриев юлташ «Новая сила» колхозра ĕçлет. Вăл Сталин юлташăн докладне кашни колхозник патнех çитернĕ. Çакна пула колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ темиçе хут ӳснĕ. «Новая сила» колхоз, малтан юлса пынăскер, ноябрь уйăхĕнче хăйĕн ĕçне темиçе хут лайăхлатрĕ. Унти И. Тарасова, К. Данилов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем авăна чи малтан çапса пĕтерчĕç. Колхоз государство умĕнчи тĕштырă обязательствисене уйăхăн пуçламăшĕнчех пурнăçланă.

Коммунист-агитатор Яков Львов — «Прогресс» тата «Венера» колхозсенче хисеплĕ хăна. Вăл Сталин юлташ докладне унти колхозниксене витĕмлĕн ăнлантарса панă. 5 калаçу туса ирттернĕ, çав калаçусенче 150 колхозник ытла пулнă. Львов юлташăн витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ сăмахĕсем колхозниксене тăрăшса ĕçлеме мобилизацилерĕç. «Прогресс» колхозăн членĕсем Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçласшăн кĕрешсе, авăн çапас ĕçе икĕ эрне хушшинчех вĕçленĕ. Государствăна срокчченех тырă, аш-какай, сĕт-çу, укçа-тенкĕ парса татнă. Колхоз государствăна 1943 çулшăн 3 центнер аш-какай, 500 литр ытла сĕт панă.

Агитаци ĕçне комсомолецсем активлăн хутшăнаççĕ. ВЛКСМ членĕ Савельева юлташ «Правда» колхозра счетовод пулса ĕçлет. Вăл Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене ялакх колхозниксене ăнлантарса парать. «Правда» колхоз авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене ноябрĕн 1-мĕшĕнчех вĕçленĕ. Колхозăн ĕне фермин иртнĕ вăхăтсенче начар ĕçленĕ. Савельева юлташ фермăри ĕçе лайăхлатма тăрăшнă. Халĕ ферма хĕле хатĕрленсе çитнĕ, выльăхсен йышне ӳстермелли государство планне пур выльăхсен енĕпе те тултарнă.

Агитаторсем колхозниксене Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшма хавхалантараççĕ. Таккасен «Колхозник Чувашии» колоннине тума ялсоветĕпе пурĕ 23 пин тенкĕ укçа пухса панă. Ялсоветĕ IV-мĕш кварталти финанс планне декабрĕн 8-мĕшĕ тĕлне 100 процентпа тултарчĕ.

Хальхи вăхăтра агитколлектив членĕсем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. Ялсоветра 4 колхоз, вĕсем пурте вăрлăх фончĕсене хывса çитерне, халĕ ялхуçалăх машинисене юсаççĕ.

С. ШАДИН.

Всевобуч пункчĕсенче

Йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем

ШĂХАСАН. Атнашри всевобуч пунктĕнче 16 комсомолец йĕлтĕрсен спорчĕн обществăлла инструкторĕсем пулма вĕренеççĕ. Вĕсем йĕлтĕрпе лайăх çӳреме, тĕрлĕрен чăрмавсене çĕнтерме, пластунла шума, гранатăна, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăна инçете, тĕл ывăтма, тĕрлĕ хĕçпăшалпа усă курма тата миномета йĕлтĕр çине майлаштарса, унпа вăрçăра усă курма вĕренчĕç. Л. Яковлев, С. Хромов, Ф. Степанов юлташсем пур енĕпе те аван тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Çак кунсенче вĕсем 50 километрлă йĕлтĕрлĕ поход туса ирттереççĕ. Çар ĕçĕпе тата йĕлтĕр спорчĕн ĕçĕпе лайăх хăнăхусем илнĕ обществăлла инструкторсем всевобуч пункчĕсенче пулас боецсене вĕрентме хатĕрленеççĕ.

А. ОРЛОВ

144 çамрăка вĕрентсе кăлартăмăр

ВĂРМАР. Йĕлтĕрçĕ-боецсене хатĕрлес тĕлĕшпе эпир райвоенкоматпа тачăн çыхăнса ĕçлэтпĕр. Çак кунсенче йĕлтĕр спорчĕн обществăлла инструкторĕсем пулма 17 çынна хатĕрлерĕмĕр. Пысăк Енкассинчи всевобуч пунктĕнче 82 çамрăка, Урнарти всевобуч пунктĕнче 62 çамрăка йĕлтĕрçĕсем хатĕрлемелли 20 сехетлĕ программăпа вĕрентсе кăлартăмăр. Пысăк Енкассинчи всевобуч пунктĕнче çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçре уйрăмах граждан вăрçи участникĕ, 50 çула çывхарнă Герасимов юлташ тăрăшса ĕçлерĕ.

Н. ЗАЛЕВСКИЙ.

Йĕлтĕр спортне вăйлатмалла

СОВЕТСКОЕ. Пирĕн физкультура коллективĕсем умĕнче лайăх йĕлтĕрçĕсем, йĕлтĕр çинче хастарлăн вăрçма пултаракан çынсем хатĕрлес задача тăрать.

Çак питех те паха задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе физкультурăпа спорт комитечĕн Советски районри уполномоченнăйĕ Тихонова юлташ нимĕн те туман.

Шкулсенче физкультура вĕрентекен опытлă учительсем пур. Анчах вĕсем те çителĕклĕ тăрăшса ĕçлемеççĕ. Мăн Чурашри вăтам шкулта физкультура вĕрентекен Недошивина йĕлтĕрпе çӳреме вĕренесси çинчен вĕренекенсемпе калаçу та ирттермен. Хучашри вăтам шкулта та йĕлтĕрçĕсем хатĕрлеме кирли çинчен, ачасен сывлăхне çирĕплетме кирли çинчен аса илмеççĕ. Ытти шкулсенче те ĕç начар пырать.

Пĕлтĕр районра йĕлтĕр тăвакан мастерской пулнă. Кăçал вăл та ĕçлемест. Обществăлла инструкторсем çук. Вĕсене хатĕрлеме те тытăнман. ВЛКСМ райкомĕ йĕлтĕр спортне çамрăксем хушшинче сарас тĕлĕшпе нимĕн те туманпа пĕрех.

Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, йĕлтĕрçĕсем хатĕрлес ĕç çине çавăн пек пăхни преступлени пулса тăрать.

И. ИВАНОВ.

Шăхасан районĕнче çутĕç учрежденийĕсем начар ĕçлеççĕ

Ĕççыннисене фронта пулăшма мобилизациленĕ çĕрте вулав çурчĕсем, клубсем, библиотекăсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Анчах районри хăшпĕр вулав çурчĕсемпе клубсем, районри культура çурчĕпе библиотека вутăсăр лараççĕ, кантăкĕсем çĕмрĕк, кăмакисем юсавсăр. Райçутĕç пайĕ (заведующийĕ В. Христофоров) 1942 çулта вулав çурчĕсен тата клубсен заведующийĕсемпе нимĕнле ĕç те туса ирттермен. Райçутĕç пайĕн политпросвет ĕçĕн инспекторĕ Шапошникова вулав çурчĕсене пулăшу памалли хаклă вăхăта кабинетра ларса ирттерет.

Шуркасси, Анат Сурăм, Энтрияль ялсовечĕсенче вулав çурчĕсем валли çурт та çук.

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерсе, халех кашни вулав çуртне, клуба, библиотекăна боевой агитпункт туса хумалла.

М. РОДИОНОВ,
В. ЯКОВЛЕВ.

ПĔЧĔК ФЕЛЬЕТОН

Çĕлĕк выранне—çĕтĕк йĕм...

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ—çине тăхăнмалли кашни япалан хăйĕн вырăнĕ пур. Калăпăр, алшише ура çине мар, алла тăхăнаççĕ, çĕлĕке тэм тусан та урана тăхăнма çук, çавнашкалах йĕме тэ пуç çине тăхăнса çӳреймĕн...

Анчах та ку—теори енĕпе пăхсан кăна иккен. Практикăра ку тĕлĕшпе те тĕрлĕрен улшăнусем пулма пултараççĕ. Шутласа тупни е тăрăшни çеç кирлĕ.

Нимĕç салтакĕсем куна иртнĕ хĕллех пит аван кăтартса панăччĕ. Вĕсем ун чухне хĕрарăм чăлхисене шарф вырăнне мăя чĕркэсе çӳрерĕç, ача фуфайкисенчен подшлемниксем туса хучĕç, пĕр-пĕр столовăйĕнчен вăрланă скатерть—вĕсэмшĕн ăшă çĕлĕк вырăнне пулчĕ. Ку ĕнтĕ Гитлер салтакĕсен 1941 çулхи хĕллехи «форми» пулнăччĕ. Пĕр сăмах та калама çук, питĕ килĕшӳллĕ форма пулнăччĕ вăл нимĕç çынçиенĕсемшĕн! Пит те килĕшӳллĕ!

Халь ак каллех хĕле кĕтĕмĕр. Кунта çанталăк çав тери сивĕтсе лартрĕ, кунĕн-çĕрĕн çилтăман çавăрттарма тытăнчĕ,—çав майпа фрицсем каллех кашкăрла ӳлеме, шăлĕсемпе шаккама тапратрĕç. Гитлер хăйĕн хурахла çарне хĕллехи кампани валли пур енчен те хатĕрлесе çитертĕм тесе мухтаннă пулин те, унăн бандичĕсем çав-çавах, пĕлтĕрхи пекех—пилоткăсемпе, сăран пушмаксемпе çеç тăрса юлнă!

Эпир куркаларăмăр ĕнтĕ 1942 çулхи хĕллехи фрицсене. Кашни кун тенĕ пекех куратпăр. Пĕлтĕрхисенчен ним расналăх та çук. Хăйсен «арийски» шăмшакĕсене сив-мучирен епле те пулин хăтарас тесе, вĕсем мĕн алла лекнĕ—çавăнпа чĕркенеççĕ...

Анчах та—ăшă япаласем çук. Кăçал ĕнтĕ вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче пĕр вырăс хĕрарăмĕн пуçĕнчен те мамăк шаль е çăмлă кофта сĕвсе илеймĕн, пĕр старик уринче те çăмата кураймăн. Вĕсене пĕлтĕрех çаратса, Германири йытамисем патне янă.

Çавăнпа та фрицсене халь çĕнĕ «эрзацсем» шухăшласа кăларма тивет. Ăшă япаласем вырăнне тем те пĕрне усă кураççĕ вĕсем—шăнса хытас марччĕ кăна!

Тунмастпăр: ку тĕлĕшпе питех те мала кайнă вĕсэм, пысăк ӳсĕмсем тунă. Ăна эпир çак кунсенче хамăр куçпах куртăмăр. Пĕр сивĕ ирхине пирĕн боецсем пĕр ушкăн нимĕç салтакĕсене, вĕсемпе пĕрлех пĕр фельдфебеле тыткăна илсе килчĕç. Тӳсме çук кулăшла картина пулчĕ вăл!..

Пĕри те этем майĕ çук. Пурте вараланса пĕтнĕ, сухалĕсене хырман, хальçеç çĕр айĕнчен сиксе тухнă юмахри шуйттансем пек. Пурте кивĕ, çĕтĕлесĕтĕле тухнă çӳхе шинельсемпе, нумайĕшĕн аттисемпе пушмакĕсем «çăварĕсене карнă». Çуллахи пилоткăсемпе. Анчах пилоткăна тем тĕрлĕ таварсан та унăн ăшши çук та, фрицсем пуçĕсене тем мурĕ те чĕркэсе тултарнă: хăшĕ-хĕрарăм кофтин çаннине, хăшĕ урана сырмалли обмоткăсене, хăшĕсем тата... такам çинчен хывнă йĕмсене чĕркенĕ! Уйрăмăнах—фельдфебель питĕ кулăшлаччĕ. Хăй çӳллĕ, самăр, сăмси çине велосипед евĕрлĕ хура куçлăх тăхăнтарнă, а пуçĕнче вара—темле кивĕ галифе! Варсене тытсах култăмăр эпир унран...

Çанталăкĕ вăл кун уйрăмах сивĕччĕ, çурçĕр енчен витĕр шăтаракан çил вĕретчĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕç кашкăрĕсем шăлĕсемпе чарусăр шаккарĕç, ăшăнма тăрăшса чечотка ташларĕç.

Ташлăччăрах! Пирĕн чаçсем, нимĕçсэн оборонине çĕмĕрсе, наступление кĕрсе кайрĕç. Эпир фрицсене ăшă йăвисенчен хӳтерсе кăларса, Хĕвеланăçнелле хăвалатпăр. Кашни кунах Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăран вăйлă çапать. Кашни кунах Российăра хĕл хаярланса пырать. Фрицсене пĕр вăхăтрах вĕри те, сивĕ те пулса пырать. Вĕсем ĕнтĕ шуйттан палли—свастикăллă хурçă каскăсем тăхăннипе те, вăрланă йĕмсемпе чĕркеннипе те хăйсен бандитла пуçĕсене хăтарма пултарас çук.

Писатель-фронтовик
ЛЕОНИД АГАКОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, тĕнĕл держависен войскисем Эль-Агейла çумĕнчи позицисем патĕнчэн каялла чакса пыраççĕ, союзниксен войскисемпе çапăçма сахал вăй тăратса хăвараççĕ. Противник нумай çĕрте минăсем хурса тухать. Çав вырăнсене Англи войскисэн малта пыракан отрячĕсем минăсенчен тасатса пы[...]

Союзниксен авиацийĕ хĕвел[...] чакакан противникăн транспортне вăйлăн пыра-пыра тапăнать.

Декабрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Тунисри тата Ля Гулеттири доксем çине питĕ нумай бомба пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă. Сицили утравĕ патĕнче тăшманăн суту-илӳ суднине путарнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Роммель çĕрле, тĕттĕмпе усă курса чакма пуçланă. Роммелĕн войскисене грузовиксем çине лартнă. Нимĕçсем хăйсен Туниспа Бизерта зонинчи позицийĕсене хăйсэн аллинче тытса хăварас тесе Африкăри мĕнпур вăйĕсене пухма шут тытнă пуль, теççĕ. Роммель халь çавăнта çитмэ тăрăшать пулмалла.

Германи пропаганди Эль-Агейла районĕнче Англи войскисен наступленине чарса лартнă тесэ каланăччĕ. Анчах апла пулсан та нимĕçсем халь Эль-Аламейн районĕнче поражени тӳснĕ хыççăн Англи войскисемпе çĕнĕрен тытăçса илмэ хăйман.

СОЛОМОН УТРАВĔСЕМ ПАТĔНЧЕ ПУЛНĂ ÇАПĂÇУ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 11-мĕшĕнче каçхине Америкăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем истребительсем пулăшса пынипе Японин тинĕс-çар вăйĕсен соединенине атакăланă, вăл соединенире 11 эсминец пулнă, вĕсем Гвадалканар утравĕ патнелле пынă. Японецсем унта хăйсен войскисем валли çĕнĕ вăйсемпе çар хатĕрĕсем илсэ пырасшăн пулнă курăнать. Атака тунă вăхăтра бомбăсем Японин хăшпĕр суднисене лекнине палăртнă. Декабрĕн 12-мĕшĕнче çĕрле Японин карапĕсене Америкăн Гвадалканара хӳтĕлекен тинĕс-çар вăйĕсем атакăланă. Атакăна пула японецсен пĕр эсминецĕ путнă, тепĕр эсминецĕ те путнă пулмалла, виççĕмĕшĕ сиэнленнĕ. Çав операцире Америкăн пĕр торпеднăй катерĕ путнă.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Бунăна илнĕ (Çĕнĕ Гвинэя).

ПЕТЭНĂН ГИТЛЕР ÇЫРĂВĔ ÇИНЕ ПАНĂ ТАРÇАЛЛА ОТВЕЧĔ

ЖЕНЕВА, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Вишире Гитлерăн декабрĕн 5-мĕшĕнче янă çырăвĕ çине Петэн панă ответа пичэтлесе кăларнă. Гитлер хăйĕн çырăвĕнче Виши «правительствине» Германи войскисене Францин оккупацилемен зонине кĕрсе кайма приказ пани çинчен, çаван пекех тата Франци çарне салатса ярасси çинчен тата Франци флотне дэмобилизацилесси çинчен пĕлтернĕ.

Петэн хăйĕн çырăвĕнче Германи войскисем Франциe пырса кĕнине тĕрĕсэ кăларать. Вăл çапла калать: Германи войскисем Францие пырса кĕни вăл Франци Африкине союзниксен войскисэм пырса аннинчен тата «хăшпĕр руководительсем сутăннинчен» килнĕ, тет.

Гитлера юрасшăн пулса Петэн малалла çапла калать: эпĕ Гитлер Франци çарне салатса яма тата Францин оккупацилемен зонине йышăнма шут тытни умĕнче «пуçа тайма çеç пултаратăп», тет; çав вăхăтрах вăл тата Гитлер çапла тума шут тытни «пĕтĕм çĕршыва пăшăрхантарчĕ» тесе палăртать. Петэн Гитлертан Франци çарне çĕнĕрен йĕркелесе яма май пурри-çукки çинчен Германи маршалĕпе Рундштедтпа калаçма ирĕк пама ыйтать.

Петэн Гитлера Виши правительствине «ирĕклĕн ĕçлеме» май пама кĕлĕмçĕ пек йăлăнать. Петэн гитлерла Лаваль полномочийĕсене чылай аслăлатни çинчен астутарать, çакă вăл «икĕ çĕршыв пĕр-пĕринпэ килĕштерсе ĕçлес политикăна» пурнăçа кĕртессине шанчăклă туса хурать, тет.

Францин Çурçĕр Африкинче Англи консульствисене çĕнĕрен уçаççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан обозревателĕ çапла пĕлтерет: Англи правительстви Алжирта çĕнĕрен генеральнăй консульство уçнă, çывăх вăхăтрах вăл тата Касабланкăпа Рабатра та консульствăсем уçать, тэт. Обозреватель çапла каланă хушăрах тата çакна палăртать: çапла туни вăл Виши правительствине йĕркеленĕ хыççăн хупнă консульствăсене çĕнĕрен уçни çеç пулса тăрать, вăл «Дарлан адмиралăн режимне йышăннине пĕрех те пĕлтэрмест», тет.

Англин Алжирти генеральнăй консулĕ пулма Карвалла лартнă.

КĔРЕШЕКЕН ФРАНЦИН ПРЕДСТАВИТЕЛĔ ДАРЛАНПА КИЛĔШУ ТУНИ ÇИНЧЕН МĔН КАЛАНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин наци комитечĕн членĕ Андре Филипп Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен таврăнсан «Дейли геральд» хаçатăн корреспондентне çапла каласа панă: «Пирĕнпе Дарлан хушшинче нимĕнле килĕшӳ те пулма пултараймасть. Эпир Франципе вăрттăн ĕçлекен çынсенчен, хамăрăн шанса лартнă çынсенчен çырусем илтĕмĕр; çав çырусенче вĕсем пире çакна çирĕп асăрхаттараççĕ: эпир Дарланпа мĕнле те пулсан килĕшӳ туса алă пусас пулсассăн, пире Франципе сутăннă çынсем вырăнне хураççĕ. Эпир хальхи вăхăтра йышăнса тăракан линирен пăрăнас пулсассăн, Франции противника хирĕç тăрас шухăш-кăмăл чакнă пулĕччĕ. Çакă вăл союзниксемшĕн хăрушă пулнă пулĕччĕ, çак хăрушлăх вăл союзниксем Çурçĕр Африкăра Дарланпа килĕшсе сирсе янă тенĕ хăрушлăхран пысăкрах пулнă пулĕччĕ. Эпĕ çакна ĕненетĕп: хальхи килĕшӳ вăл чăн-чăнах вăхăтлăха тунă килĕшӳ пулса тăрать, Тунисри çапăçусем вĕçленсенех çав ĕçе тӳрлэтĕç».

ЛЕБРЕН ФРАНЦИРЕН ТАРНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци республикин президенчĕ пулнă Альберт Лебрен Францирен нейтральнăй çĕршыва тарнă.

ТУРЦИРЕ КАЛЛЕХ ÇĔР ЧĔТРЕНĔ

АНКАРА, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Чорумра каллех çĕр чĕтренĕ. 600 çурта яхăн ишĕлнĕ. Официальнăй даннăйсем тăрăх, 25 çын вилнĕ, 11 çын аманнă.

КĔСКЕН

Союзниксен Атлантика океанĕ урлă унăн çурçĕр пайне каçакан мĕнпур суднисен çуррине яхăн Канадăн тинĕс-çар флочĕ хӳтĕлесе пырать.

Вăрçă пуçланнăранпа 12.000 судно Канадăран Англие 65 миллион тонна çар хатĕрĕсем турттарса пынă.

Канадăра виçĕ çул хушшинче 300 яхăн çар карапĕ тата 1.100 вак суднăсем туса пĕтерне. Хальхи вăхăтра тата 2.000 вак судно тăваççĕ. Программăра 10 миллион тонна водоизмещениллĕ 300 грузовой судно ытла тума палăртнă. Вĕсенчен 70 суднине ытла туса пĕтернĕ ĕнтĕ.

* * *

Либерия Виши правительствипе çыхăну тытма пăрахни çинчен пĕлтернĕ.

* * *

Лăпкă Океанăн кăнтăр пайĕнче Америкăн пысăк çар транспортне путарнă. Çăлас ĕçе питĕ хастарлăн тунине пула, çав судно çинче пулнă 4.000 салтакпа офицертан мĕнпурĕ те 4 çын çеç пĕтнĕ. (ТАСС).

* * *

Кăçалхи июньрен пуçласа сентябрьччен Инди çарне çĕнĕрен 272 пин салтак илнĕ. Пĕлтĕр çав вăхăт хушшинче çара 190 пин салтака яхăн илнĕ пулнă. Çар хатĕрĕсем тăвасси те нумай ӳснĕ. Сăмахран, халь винтовкăсем 6 хут, пулеметсем 8 хут, штыксем 10 хут, патронсем 24 хут, тупăсем 9 хут ытларах кăлараççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Доводится до сведения организаций и учреждений, что пристань Чебоксары с 16/XII—1942 г. по 10 февраля 1943 года проводит заключение договоров на перевозку грузов с большой, малой скоростью и на буксировку плотов в навигацию 1943 года по всем рекам Волжского Бассейна.
ПРИСТАНЬ.
2—2

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ: начальник планово-финансового отдела, старший диспетчер, бухгалтер, зав. складом Киноремснаба, мастера по ремонту киноаппаратуры, слесаря и ученики.

Оплата по соглашению.

Справляться по адресу: гор. Чебоксары, улица Ленина, 21, Управление Кинофикации при СНК ЧАССР. Телефон № 3—95.

Доводится до сведения всех фабзавкомов и страхователей о том, что с декабря месяца с/г. Профессиональный Союз Рабочих Городских предприятий переименован в „Профессиональный Союз Рабочих Местной промышленности СССР".
Адрес Обкома Союза: г. Чебоксары ул. Плеханова, д. № 26.

ЧУВАШСПЕЦТОРГУ требуются на постоянную работу: сапожники, портные, возчики-конюха и уборщица.

Обращаться по адресу: ул. Калинина, дом № 51.

Чебоксарской больнице (Чувашская, д. № 20) требуется: завхоз, дворники, ночные охранники, шофер.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—23, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11634 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.